**Кириллов, Тарас Кириллович (1880-1921).**
**Çывăхри ял-йышсем [хайлаври сыпăк]**

Кирек ăçта кайсан та
Ху халăхна ан хурла.
Кирек ăçтан килсен те
Халăхушăн усă кўр.
Эпир чăваш, пĕр ухмах,
Тесе апла ан хурла.
Туррăн хура халăхне
Хурламашкăн юрамасть.
Санăн чĕлхў авалтан
Начар тесе ан кулян.
Çыннăн ырă пуласси
Ырă кăмăлтан килет.
Ырă, ăшă кăмăла
Ырă сăмах палăртать.
Кирек мĕнле чĕлхе те
Ку таранччен пурăнать.
Çухаласси тахăçан;
Ăна кĕтсе пурăнсан,
Ху чĕлхуна ху мансан
Кая юлăн выльăхран,
Вĕçсе çўрен кайăкран.
Шăпчăк юрлать шăпчăкла,
Кукку тата кукуклать,
Путенен те юрри пур, —
Çĕр çинчи пур кайăксен
Харпăр хăйĕн юрри пур —
Кам вĕсене хупăрлать,
Хăйсем пĕлнĕ юррине
Кам вĕсене мантарать? —
Вĕт никам та мантармасть.
Çавăн пекех çынна та
Мантараччен нумайрах
Вĕрентмешкĕн çулне уç.
Калаç, вĕрен, ăса кĕр.
Ырă, канлĕ пурăнма
Пулăш пултăр пĕлнинчен».

Кириллов, Тарас Кириллович (1880-1921). Суйласа илнисем : сăвăсем, поэмăсем. - Шупашкар : ЧПГĂИ, 2010. – С. 147.